Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

# Хирсем пушанаççĕ – Пукрав çывхарать

Ир-каç сивĕсем вăй илни, тăм ӳкме пуçлани, таврари хĕрлĕ-сарă çулçăсен ташши, тӳпере кайăксем пысăк ушкăнсене пухăнса вĕçни кĕркунне хăйĕн прависемпе анлăн усă курма пуçланине пĕлтерет. Ылтăн кĕркунне... Пуян-и-ха вăл кăçал? Кĕр мăнтăрĕпе туйсем кĕрлеттермелĕх пулĕ-и пуянлăх? Çак ыйтусем çине хурав тупма паян юлхавланмасăр хире тухса пăхмалла. Тавралăха уй тӳпинчен пăхсан пĕтĕм лару-тăру алă тупанĕ çинчи пек курăнать, кашни хурав куç умĕнче...



М.Ф. Плюхин диспетчер хăйĕн ĕçне ответлăха туйса пурнăçлать.



М.В. Бурцевăн пресс-подборщикĕ лăш канмасăр ĕçлет.

“Герой” пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçченĕсем те ыттисемпе пĕрле пĕр пĕлĕт айĕнче пурăнаççĕ, пĕр сывлăшпа сывлаççĕ, анчах ĕç çине пăхаслăх Екрем тăрăхĕнче урăхларах: хресченĕн хăй ĕçĕшĕн ответлăха туйса тăрасси, кашни ĕçе хăй вăхăтĕнче пурнăçлассишĕн тимлесси кунти ĕçченсен шăнăрĕнче вырнаçнă, тейĕн. Çакнашкал пĕтĕмлетӳ тухса тăчĕ те ман куç умне хуçалăхăн диспетчерĕпе Михаил Филимонович Плюхинпа калаçсан. Мехпаркăн пĕтĕм нарячĕсене хăй урлă кăларакан специалист водительсемпе механизаторсене кулленех рейса тухас умĕн медицина тĕрĕслевĕ витĕр кăларать, кунсерен ирхи 5 сехет çурăра вырăнти радиопа ĕç нарячĕ парать.

– Мана çак ĕçе тума шаннă та ăна манăн ячĕшĕн тăвас килмест. Кашни çын хăйĕн ĕç фронтĕнче тӳсĕмлĕхпе ответлăх кăтартать пулсан тата ун хыççăн теприн тĕрĕслесе çӳремелле мар-тăк ĕç малалла каятех, – терĕ сакăр çул диспетчерта вăй хуракан Михаил Филимонович механизаторсене улăм турттарма кайма путевкăсем çырса панă май.

– Пĕри ответлăха туять пулсан, теприн пĕрлехи ĕçе хăй еккипе яма юрамастех. Çак чăнлăха асра тытса паян, акă, эпир юлашки гектарсем çинчи улăма пуçтарма каятпăр, – калаçăва хутшăнчĕ пĕрремĕш уй-хир бригадин бригадирĕ Вячеслав Григорьевич Борзаев. – Улăм пĕтернĕ май бригада ĕçченĕсен выльăх кăшманĕ кăлармалли çеç юлать. Ăна та, ăнса пулнăскере, юр айне хăварас килмест.



Улăм рулонта – хирсем пушанаççĕ.



В. Борзаев бригадирпа В. Степанов тата Ю. Антонов механизаторсем (сулахайран сылтăмалла).

Путевка илнĕ механизаторсемпе водительсен бригади хире тухрĕ те ĕç васкаварлăн пуçланса кайрĕ. Бурцев-механизаторсен династийĕн виççĕмĕш сыпăкри тракторичĕ Михаил Владимирович пĕр чарăнмасăр рулонлă пресс-подборщикпа хир тăрăх каллĕ-маллĕ хутлать. Хĕл кунĕсенче выльăхсемшĕн пĕртте ытлашши мар улăма пухнă рулонсем хир анлăшпех выртса юлаççĕ. Вĕсене Юрий Антонов механизатор Юрий Михайлов водителĕн прицеплă автомашинипе Владимир Степановăн трактор прицепĕ çине тиесе парать. Улăм ыйтакан ял çыннисем патне, фермăсем çывăхне пырать.

Уй тӳпинчен инçетре курăнакан хирте хуçалăх ĕçченĕсем юлашки гектарсем çинче “иккĕмĕш çăкăра” пуçтарни курăнать. Çапла, хирсем пушаннă май Пукрав çывхарни те Шурчасемшĕн хăрушă мар. Ытарлă каласан, “Герой” хуçалăх ĕçченĕсем ваттисем хушнă пек ăшă тытнă ĕнтĕ.

**ВĔÇĔНЧЕ КАЛАНИ. “Герой” пĕрлешӳллĕ хуçалăх çак кĕркунне 577 гектар çинчен тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем вырса кĕртрĕ. Вăтам тухăç хальлĕхе 21 центнер. Ку вăл районăн вăтам кăтартăвĕнчен 5 центнер пысăкрах. Кунпа пĕрлех хуçалăх 115 гектар çинче кĕрхи культурăсем акса хăварчĕ, 60 гектар çинче çĕр улми туса илчĕ, 300 гектара яхăн çĕртме сухи турĕ (ку ĕç малалла пырать).**

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Общество сывлăхĕшĕн пĕрле тăрăшар

# Хамăр малашлăх хамăр алăра

Пурнăç малалла кайтăр тесе Раçей Федерацийĕнчи пекех Чăваш Республикинче те Президентпа Министрсен Кабинечĕ шайĕнче пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Экономикăпа социаллă аталану малалла кайччăр тесе республика ертӳçисем тĕрлĕ программăсене çул уçаççĕ, расна технологисене ĕçлеме майсем туса параççĕ. Йăлтах экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕшĕн.

1999 çултан пуçласа Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокуратура вырăнсенче биологилле каяшсене ветеринарипе санитари законодательствисене пăхăнса тирпейленине тăтăшах пăхса-тĕрĕслесе тăрать. Уйрăм тимлĕх – Чăваш Республикинчи выльăх çăвисем тĕлĕшпе.

Вырăнсенче биологилле каяшсене тирпейленине çут çанталăка хӳтĕлекен прокуратура шайĕнчен пăхса тĕрĕсленĕ чух республика территорийĕнче 862 выльăх çăви пулни куç умне тухнăччĕ. Вĕсенчен 463-шĕнче çĕпĕр чирĕллĕ (сибирская язва) выльăхсене пытарни паллăччĕ. Çавăнпа та вĕсем пирки самантлăха та манма юрамасть. Çакна пăхăнса ĕçлеççĕ те ĕнтĕ çут çанталăка сыхлакан яваплă органсем. Лару-тăрăва тĕрĕслесе тăракансем кăçалхи 8 уйăхра республика территорийĕнче иртternĕ ĕçсен кăтартăвĕсемпе татах 11 выльăх çăви “тупăнчĕ” те çак çăвасен хисепĕ 873-не çитрĕ. Тупăннă çăвасенчен пĕри çĕпĕр чирĕллĕ выльăх пытарнă пулнăран кун йышши çăвасем те малашне 464 шутланĕç.

2005 çулта тĕрĕслев органĕсен тăрăшулăхĕпе (Чăваш Республикинчи Россельхознадзор управленийĕ, Чăваш Республикинчи патшалăх ветеринари служби, Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕн специалисчĕсене явăçтарнипе) учетра тăракан пур выльăх çăвисене те çитсе курнă. Кăçалхи 8 уйăхра Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕ палăртнă пĕтĕм выльăх çăвисенчен 719-шне (82 процент) тĕрĕсленĕ. Çав шутра 389-шĕ (84 процент) – çĕпĕр чирĕллĕ выльăхсем пытарнă çăвасем. Выльăх çăвисене тĕрĕслени çакна кăтартать: 214-шĕ пĕтĕмпех çирĕплетнĕ правилăсене пăхăнса тăраççĕ (мĕн пур хисепĕн 30 проценчĕ).

Саккун ыйтнă пек 289 çăва тавра (40 процент) карта тытнă, 404-шĕ тавра (56 процент) канав чавса тухнă, 518-шĕ патне кайма (72 процент) кăтартса çырнисем пур.

Выльăхсемпе çынсемшĕн пĕрешкел вилĕм хăрушлăхлĕ, инфекциллĕ çĕпĕр чирĕн спорисем тăпра айĕнче çĕршер çул пурăнса та хăйсен хăрушлăхне çухатмаççĕ. Вĕсем ирĕке тухсан выльăхсене те, çынсене те массăллă чирлеттерме пултарас хăрушлăх нумай вăхăт иртсен те сыхланса юлать. Çавăнпа та çынсен выльăх çăвисем тĕлĕшпе, уйрăмах унта çĕпĕр чирĕллĕ выльăхсене пытарнă пулсан, çивĕч тимлĕхре пулмалла, ветеринарипе санитари законодательствине пĕр пăркаланмасăр çирĕп пăхăнса пурăнмалла.

Ирттернĕ тĕрĕслевсем çакна кăтартса пачĕç: Чăваш Республикин территорийĕнчи выльăх çăвисенчен чылайăшĕ саккунпа ыйтнă йĕркене тивĕçсе тăмаççĕ. Çакна курса тăрса ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, ял çыннисене выльăх çăвисем тĕлĕшпе саккунпа килĕшӳллĕ чару йĕркисемпе тепĕр хут паллаштарас тетĕп: выльăх çăвисен территорийĕсенче утă çулма юрамасть, вăл территорисенчен тăпра илмелле мар, унта выльăхсене кĕтсе çӳрессинчен пăрăнмалла, выльăх çăвисем тавра ĕлĕкрех тунă канавсене çĕнетессипе ĕçлемелле мар, асăннă территорисенче строительство ĕçĕсем тăвассинчен пăрăнмалла тата çав вырăнсенче вилнĕ выльăхсене çĕнĕрен пытарма юрамасть.

Выльăх çăвисем çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвне пăснă тĕслĕхсене курсан, кун пирки пĕр тăхтаса тăмасăр Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокуратурăна çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: 428027, Шупашкар хули, Эгер бульварĕ, 24. Тел.: 57-52-18.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокурор ĕçĕсене туса пыраканĕ, 2-мĕш класлă юрист.**

Çамрăксем хушшинчи воспитани ыйтăвĕсемпе

# Ĕçе юратăр, çĕршыва ан сутăр

Çамрăксене тĕрĕс воспитани парасси пирки паян нумай калаçаççĕ, анчах ку енĕпе конкретлă ĕçсем çеç туллин курăнсах каймаççĕ. Асăннă ĕç нумай енлĕ пулни унăн кăткăслăхне çеç кăтартать. Кунта вара аслисен çиччĕ виçсе пĕрре касмалли сахал мар. Çак ĕçре пире хупăрласа тăракан тĕнче, общество аталанăвĕ малти вырăна йышăнать.

Ачана тăмпа танлаштарни пур: тăм çăрса унран мĕн тăватăн – алăра çавă пулать. Пирĕн пепкесем пурнăç çулĕ çине тухса пырасси те çавна майлах: çемьери сывă пурнăçран тата шкулти пуçламăш утăмсенчен йĕркеленсе пырать. Ача хăйĕн вăхăчĕн ытларах пайне шкулта ирттернĕрен çĕршывăн пуласлăхĕ унта тымар янинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Çавăнпа та ачан малашлăхĕ шкулпа тачă çыхăннă. Кăшт ĕлĕкрех шкул ачисем октябренока, пионера, комсомола кĕрсе коллективизма, хушнă ĕçшĕн ответлăха туяссине, пĕлӳ тĕп никĕс пулнине, малашлăха çиччĕ виççе пăхмаллине кĕçĕн çулсенченех алла илме пуçлатчĕç-вĕренетчĕç. Паян вара шкулсенче асăннă организацисем вырăнĕнче шурă пăнчă. Çавăнпа та юлашки çулсенче шкулсенче çар тивĕçне пурнăçланă яшсемпе тĕл пулусем йĕркелени питех те вырăнлă тесе шутлатăп. Афганецсемпе, Чечен Республикинчи вăрçăна хутшăннисемпе, çар комиссариачĕн представителĕсемпе йĕркеленĕ тĕл пулусем шкул пĕтерекен яшсенче çĕршыв юратăвне вăйлатать, уншăн кĕрешме йыхравлать.

Паянхи яшсем хушшинче çĕршыва хӳтĕлес тивĕç çине тĕрлĕрен пăхнине курма пулать. Салтак пăттине çименнисем тепĕр чух хăйсене авторитетлăрах та тытаççĕ, анчах... Паян çарти лару-тăру ыррине шантарать пулсан та, çарта халĕ камсем службăра тăнине шутласа пăхăр-ха. Унта-çке пирĕн обществăн çимĕçĕ. Çакна тата çĕршыва хӳтĕлеме кирлине ăнланса çул çитнĕ кашни сывă каччăн конституци тивĕçне пурнăçлама хатĕр пулмалла тата пурнăçламалла та.

Ĕлĕкрех çара кайман каччă сывах марри пулнă. Паян вара... Çарта пулнисемпе, çапăçусене хутшăннисемпе ирттернĕ тĕл пулусем яшсене сывлăх çине ытларах пăхма вĕрентеççĕ: сывлăх пулмасан, вăйхал çителĕксĕр пулсан, йывăрлăхсенчен таса-сывă тухасси иккĕленӳллĕ. Çак тĕрĕслĕх воин-интернационалистсемпе, Чечняра çар службин тивĕçне пурнăçланисемпе, ытти çĕрте çĕршыв хӳтĕлевĕнче тăнисемпе ирттернĕ тĕл пулусенче уçăмлă курăнать. Паянхи 16–17 çулхи яшсем ĕнер çеç çарта пулнисем каласа панинчен çарти туслăх пирки ăнланаççĕ, хăйсенчен кăшт аслăрах юлташĕсем çĕршыва епле юратнине кураççĕ. Атте-аннешĕн, учительсемпе юлташсемшĕн, Тăван çĕршывшăн кам ответлăха епле туйни çарта лайăх палăрать. Çак калаçусенче çамрăксем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи климат условийĕсене кураççĕ, вĕсенчи инфраструктурăпа паллашаççĕ.

Учительсемпе воин-интернационалистсем тăрăшнипе шкулсенче час-часах паттăрлăх урокĕсем иртеççĕ. Унта ачасем физкультура пĕлтерĕшне çирĕплетеççĕ, малашне профессисем суйланă чух яшсем çарта пулни курăмлă пуласса ĕненеççĕ. Çакнашкал тĕл пулусем çамрăксемшĕн вырăнлă та усăллă пулни пирки иккĕленӳ çук. Çакăн евĕр мероприятисем шкулсенче анлăрах сарăласса, вĕсем кашниншĕнех усăллă пуласса шанса тăратăп.

**Вячеслав КИРШЕВ,**
**районти воин-афганецсен канашĕн председателĕ.**

Усăллă канашсем

# Уяр

Сĕм авалтан çĕр çыннисем уярсене пухса хăйсен анисем çинче сапалама тăрăшнă. Çак кăпшанкăна (çурăмĕ çинче хура пăнчăсем пур) халĕ те ӳсентăран пыйтисем хупласа илнĕ туратсем çинче курма пулать. Уяр юлашки пыйта çисе ямасăр та вĕçсе каймасть. Пĕр талăкра вăл икçĕре яхăн, хăйĕн ĕмĕрĕнче 6 пине яхăн пыйтă пĕтерет.

Çуркунне ӳсен-тăран пыйти питĕ хăвăрт ĕрчеме тытăнать, вăл ытлашши нумайланса каясран усăллă кăпшанкăсем, çав шутра уяр та, пĕтерме пулăшаççĕ. Уяр сăтăрçăсене химикатсем лекеймен вырăнсенче – пĕтĕрĕннĕ çулçăсем ăшĕнче те тупма пултарать.

Уяр хăвăрт ĕрчет. Пĕр уяр ами пыйтăсен колонийĕнчен çĕре яхăн шупка сарă çăмартасене пĕчĕк купасене 10-30-шар штук хурса хăварать. Çиелтен пăхсан çак çăмартасем колорадо нăррин çăмартисем пекех. Анчах та вĕсем икĕ хут пĕчĕкрех. Çавăнпа та вĕсене ан пăтраштарăр.

Çăмартаран тĕксĕм, шăртлă, шĕпĕнлĕ, сарă пăнчăллă личинкăсем тухаççĕ. Малтан вĕсем вĕтĕ пыйтăсемпе, вĕсен çăмартисемпе тăранса пурăнаççĕ. Каярахпа вара пыйтăсене ашшĕ-амăшĕ пекех йышлă пĕтерме пуçлаççĕ. Çăмартаран тухнă кăпшанкă пĕр уйăхра ӳссе çитет.

Хĕл каçмашкăн уяр тăкăннă çулçăсем, ӳсен-тăран юлашкийĕсем айне, меллĕ шăтăкçурăка кĕрсе вырнаçать.

Яшсемпе хĕрсем – ял хуçалăхĕнче

# Фермăра вăй хучĕç

Вăхăт хăвăрт иртет, унăн утти хыççăн хăваласа çитме те çук. Çавăнпа та унпа усăллă усă куракансене манăн пысăк тав сăмахĕ калас килет. Акă, ĕнер пек кăначчĕ-ха ачасене çуллахи каникула ячĕç. Паян вара çу кунĕсене хĕрӳ ĕçре ирттернĕ шкул ачисем каллех партта хушшине кĕрсе ларчĕç, пĕлӳ тĕнчин черетлĕ картлашкине çĕкленме пуçларĕç. Паян вĕсенчен кашниех ĕç чĕрĕкне епле ирттернине пĕтĕмлетет.

Йӳçкассинчи вăтам шкулти пурнăç та ытти çĕртинчен уйрăлсах тăмасть. Кунти ачасем те çу кунĕсене расна ирттерчĕç. Пĕрисем ĕçпе кану лагерĕсенче вăй хучĕç, иккĕмĕшсем йытă хăваласа çӳрерĕç, виççĕмĕшсем “Ударник” хуçалăх ферминче пăрусем пăхрĕç.

Валерий Хорьков иртнĕ вĕренӳ çулĕ вĕçленсенех фермăра пăрусем пăхма килĕшрĕ. Çу кунĕсенче вăл хăйне шаннă ĕçе чăн-чăн хуçалла пурнăçлама вĕренсе çитрĕ: пăрусене сĕтпе тата утă шывĕпе шăварать, хыççăн çемçе утă парать, умĕсене çăнăх хурать. Выльăх-чĕрлĕхе юратакан каччă кăçал вуннăмĕш класа кайрĕ. Шкул пĕтерсен вăл зоотехник е ветеринар ĕçне суйласа илсен, çакăнтан тĕлĕнмелле пулмĕ.

Пăрусен çуллахи лагерĕ вăрман çумĕнче вырнаçнă, пĕве те юнашарах. Выльăхсемшĕн те, ачасемшĕн те питĕ меллĕ вырăн. Ирсерен Дима Семенов, Дима Мышев, Иван Васильев пăрусене çакăнта ешĕл курăк çине хăваласа тухаççĕ. Ирĕкре çӳретсен-çӳретсен ачасем вĕсене кăнтăрла картана хупаççĕ. Каçчен вара каллех çарана илсе тухаççĕ...

Ывăнма пĕлмесĕр тăрăшрĕç ачасем хуçалăх выльăхĕсемшĕн. Çавăнпа вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче хуçалăх панă парнесем те вĕсемшĕн вырăнлă çеç пулчĕç.

**В. ЗОТИКОВ.**